Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРӲШĔН

Шăматкун
2008 ç., кăрлач, 12

2
/9026/№

Хаçат 1932 çултанпа
тухса тăрать

Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

**Прокуратурăн хисеплĕ сотрудникĕсемпе ветеранĕсем!**

Сире хăвăрăн професси уявĕпе – Раççей Федерацийĕнчи прокуратура ĕçченĕн кунĕпе чĕререн саламлатăп.

Эсир питĕ кирлĕ задачăна пурнăçлатăр – вăйра тăракан саккунсем мĕнле пурнăçланнине, патшалăх интересĕсене, кашни гражданинăн прависемпе ирĕкне хӳтĕленине тĕрĕслесе тăратăр. Саккунсем кăларакан тата ĕç тăвакан влаçа граждансем мĕнлерех шанасси нумай чухне сирĕн ĕçĕрпе çыхăннă. Эсир ӳлĕмрен те хăвăр умăрти задачăсене чыслăн пурнăçа кĕртсе пырасса шанас килет.

Сире тата çемйĕрсене тăнăçлăх, ырлăх, телей тата тивлет сунатăп.

***Павел СЕМЕНОВ,***
***Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ, «Единая Россия» фракци членĕ.***



## Саккунлăх хуралĕнче

**Раççей Федерацийĕн Генеральнăй прокурорĕн 2007 çулхи раштавăн 26-мĕшĕнчи приказĕпе килĕшӳллĕн пирĕн район прокурорĕ пулма 1-мĕш класлă юриста Алексей Александрович БОЧКАРЕВА çирĕплетсе лартнă. Хаçат вулаканĕсене А. А. Бочкарев прокурорăн професси уявĕ тĕлне хатĕрленĕ сăмахĕпе кĕскен паллаштаратпăр.**

Пирĕн çĕршывра кашни çулах январĕн 12-мĕшĕнче Раççей прокуратурин кунне паллă тăвасси йăлана кĕчĕ. Прокуратура – граждансен интересĕсемпе прависене хӳтĕлекен, саккуна пăхăннине асăрхаса тăракан орган. Çĕршыв тăнăçлăхне тытса тăрас ĕçе Йĕпреç районĕнчи прокуратура ĕçченĕсем те хăйсен сумлă тӳпине хываççĕ. 2007 çулта саккун йĕркисене пăснă 1308 тĕслĕхе тупса палăртнă, çав шутран экономика сферинче – 293, граждансен ирĕкĕпе правине пăснисене – 752. Иртнĕ çул граждансен ĕç правине хӳтĕлесе, вĕсене тӳлемен ĕç укçине шыраса илесси çинчен районти суда 530 тавăç тăратнă, ĕç законодательствине пăсма юраманни çинчен асăрхаттарса яваплă должноçри 35 çын патне предостережени çитерсе панă, саккуна хирĕçлекен 165 право актне пăрахăçланă.

Çутçанталăка сыхлас сферăра саккун йĕркисене пăснă 62 тĕслĕхе тупса палăртнă, вĕсем тăрăх яваплă должноç йышăнакан 20 çынна дисциплина тĕлĕшĕнчен явап тыттарнă, тепĕр 21 çын çутçанталăка сыхлас законодательствăна пăхăнманшăн административлă яваплăх тытнă.

Район прокуратури çул çитмен çамрăксен интересĕсемпе прависене хӳтĕлесси çине пысăк тимлĕх хурса ĕçлет. Ку тĕлĕшпе районти суда пĕтĕмпе 34 тавăç тăратнă. Çул çитменнисемпе çыхăннă законодательствăсемпе килĕшӳллĕн должноçри 23 çын патне представлени çитерсе панă. Тавăçсене пурне те тенĕ пекех çул çитменнисене майлă татса панă.

Хальхи вăхăтра район прокуратуринче вăй хуракансем кунта унччен тăрăшса ĕçленĕ çынсен ырă йăлисене, опытне мала хураççĕ, ветерансен паха тĕслĕхĕнчен вĕренсе пырса саккунлăх хуралĕнче татах та тухăçлăрах ĕçлеме хăнăхаççĕ. Прокуратура ветеранĕсем Н. И. Яшин, Л. Г. Федоров çĕнĕрен ĕçлеме килекенсемшĕн чăн-чăн авторитет пулса тăраççĕ.

Хаçатра сăмах илнипе усă курса, паян манăн хаклă ĕçтешĕмсене, прокуратурăн тивĕçлĕ канури мĕнпур ветеранĕсене професси уявĕ ячĕпе саламлас килет, эпĕ вĕсене пысăк яваплăх ыйтакан ĕçре ăнăçусем тума çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, телейпе тăнăçлăх сунатăп.

**ӲКЕРЧĔКРЕ(сылтăмран сулахаялла):** *район прокурорĕ А. А. Бочкарев, прокурор помощникĕ А. Н. Якушевич, прокурор çумĕ Л. В. Можаева.*

***С. БЫКОВА***
***сăнӳкерчĕкĕ.***



## Ача çуралчĕ

2008 çулта ку таранччен районта 5 ача çуралнă. Район пуçлăхĕ Анатолий Петров çĕнĕ çула кĕнĕренпе районта пĕрремĕш çуралнă ача ашшĕ-амăшне – Вăтаелĕнчи Татьяна Геннадьевнапа Георгий Павлович Питимировсене çемьене хĕр килнĕ ятпа саламланă *(ӳкерчĕкре).* Хĕр пĕрчине Эмилия ят хунă. Телейлĕ мăшăра çавăн пекех районти ЗАГС пайĕн ертӳçи Татьяна Мородина саламланă, ача çурални çинчен калакан документа панă.

2008 çула Раççейре «Çемье çулталăкĕ» тесе ят панă. Шăп та çулталăк пуçламăшĕнче çемьене «çĕнĕ кайăк» килни – тивлетлĕх палли. Çĕршывра тăнăçлăх, çемьере килĕшӳ, пӳрт-çуртра ача сасси пултăр.

## РЕШЕНИЕ
### Собрания депутатов Ибресинского района
### Об отмене решения Собрания депутатов Ибресинского района от 12. 12. 2007 г. №20 «О назначении выборов депутата Собрания депутатов Ибресинского района по избирательному округу №7

На основании Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» от 12. 06. 2007 г. №67-ФЗ, Устава Ибресинского района, в связи с переносом сроков проведения выборов депутата Собрания депутатов Ибресинского района по избирательному округу №7 на более поздний срок Собрание депутатов Ибресинского района решило:

1. Отменить решение Собрания депутатов Ибресинского района от 12. 12. 2007 г. №20 «О назначении выборов депутата Собрания депутатов Ибресинского района по избирательному округу №7».

***Глава Ибресинского района***
***А. И. ПЕТРОВ.***

п. Ибреси, 10 января 2008 г., №1.

**АНОНС**

## Состоится учебно-методический сбор

В соответствии с планом основных мероприятий района в области гражданской обороны 21 января 2008 года в актовом зале администрации района проводится учебно-методический сбор по подведению итогов деятельности гражданской обороны районного звена территориальной подсистемы Чувашской Республики, выполнения мероприятий гражданской обороны, предупреждения и ликвидации чрезвычайных ситуаций, обеспечения пожарной безопасности и безопасности людей на водных объектах в 2007 году и постановке задач на 2008 год.

К итоговому учебно-методическому сбору привлекаются главы сельских и городского поселений, начальники отделов райадминистрации, руководители нештатных аварийно-спасательных формирований, руководители, работники, специально уполномоченные по вопросам гражданской обороны, предупреждения и ликвидации чрезвычайных ситуаций, обеспечения пожарной безопасности и безопасности людей на водных объектах, предприятий, учреждений и организаций района.

***П. ПЕТРОВ,***
***начальник отдела ГО ИС администрации района.***

**ЦИТАТА**

**Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир ПУТИН:**



«Раççейри нумай регионсемпе танлаштарсан, чи палăртмалли тата чи хакламалли – Чăваш Енре нефть те, газ та, тимĕр те çук. Çав вăхăтрах унăн аталанăвĕ позитивлă. Эпĕ çĕршывăн вăтам шайĕнчен çӳлерех тесе те калană пулăттăм. Çакă вăл ĕçе тĕрĕс, çавăн пекех интеллектлă йĕркеленипе те пулса пырать. Ытларах ĕçе мĕнле туса пынинчен нумай килет тесе шутлатăп. Çакă –ытти регионсемшĕн ырă тĕслĕх».

## Иртнĕ çула лайăх вĕçлерĕмĕр, малашлăх шанăç кӳрет

**Кăрлачăн 9-мĕшĕнче Чăваш Республикин премьер-министрĕ Сергей Гапликов республика правительствин членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу irттернĕ.**

Финанс министрĕ Николай Смирнов 2007 çулхи бюджета пурнăçланин малтанхи пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен пĕлтернĕ. Республика бюджечĕн тупăш пайне планран ирттерсе 101,8 процент тултарнă, унччĕнхи çулпа танлаштарсан хамăрăн тупăшсен калăпăшĕ 40 процент ӳснĕ. Министр палăртнă тăрăх, Чăваш Республикин социаллă пурнăçĕпе экономики кирлĕ пек аталанса пынипе, унăн промышленноç вăй-хăвачĕ ӳснипе çапла ĕçлеме пултарнă. Çавна май палăртнă программăсене, бюджет обязательствисене туллин пурнăçланă.

Федераци налук службин Чăваш Республикинчи Управленийĕн ертӳçи Аркадий Дергачев 2007 çулта налук тупăшĕсем мĕнлерех пырса кĕни çинчен тĕплĕн каласа панă. Малтанхи пĕтĕмлетӳсем тăрăх, республикăра 31 млрд. тенкĕ ытла налук пухнă, çав шутра мĕн пур шайри бюджета – 24 млрд. тенкĕ ытла тата бюджета кĕмен фондсене – 7 млрд. тенке яхăн. 2006 çулхипе танлаштарсан, мĕн пур шайри бюджетсене налуксем пухнин ӳсĕмĕ 130 процент ытла пулнă. Бюджетсен мĕн пур шайне тата бюджета кĕмен фондсене налуксем пухас енĕпе маларах палăртнисене ирттерсе тултарнă.

Кăçалхи бюджет çинчен сăмах пуçарса финанс министрĕ Николай Смирнов «бюджетран мĕн пур енĕпе туллин тата шанчăклăн укçа уйăрма пуçлани» çинчен каланă. Çакна палăртнă: «Паян эпир нарăсăн 1-мĕшĕнчен бюджет сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине 14 процент, çар служащийĕсен укçине тата пенсине икĕ тапхăрпа – нарăсăн 1-мĕшĕнчен тата юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнчен ӳстерес ыйтăва татса пама хатĕр. Çак кунсенче 2008 çулхи бюджета улăштарасси çинчен саккунăн тивĕçлĕ проектне тăратăпăр». Николай Смирнов çак тĕллевпе тата 550 млн. тенкĕ тупмаллине палăртнă.

Хула тăвас ĕç тата общество инфратытăмĕн аталанăвĕн министрĕ Александр Гончаров кăрлачăн 4-мĕшĕнче Раççей Регионсен аталанăвĕн министерстви пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха аталантарма пулăшакан фондран субъектсене финанс пулăшăвĕ памалли лимитсене çирĕплетнине пĕлтернĕ. Чăваш Республикине федераци паракан пулăшăва ӳстернĕ – республикăна тата 200 млн. тенке яхăн хушса панă, çав шутран 8 млн. тенке яхăн – çурт-йĕре тĕпрен юсама, 116 млн. тенкĕ ытла япăхса çитнĕ тата ишĕлме пултаракан çуртсене пĕтерме ярĕç.

Уяв кунĕсенчи оперативлă лару-тăрăва хакласа шалти ĕçсен министрĕ Вадим Антонов тĕпрен илсен вăл йĕркеллех пулнине палăртнă, право йĕркине сыхлакан органсем хушма мерăсем йышăннипе çапла ĕçлеме май килнĕ. Уйрăммăн илсен, общество право йĕркине тивĕçтерме çĕнĕ маршрутсем тăрăх патрульле тухассине йĕркеленĕ. «Пиротехника» операци ирттернĕ май 45 пин единицăна яхăн пахалăхсăр тĕрлĕ пиротехника изделийĕ тытса илнĕ – иртнĕ çул вĕçĕнче çула çитмен çамрăк çакнашкал пахалăхсăр изделипе вăйлах мар суранланнă. Республикăри çулсем çинче те лару-тăру йĕркеллех пулнă. Кăрлач уйăхĕнче çулсем çинче 10 аварие шута илнĕ, вĕсенче 10 çын аманнă. Иртнĕ çулта ун пеккисем 67-ĕн пулнă.

Граждан оборони тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн ертӳçине Виталий Петькова пушарсемпе çыхăннă лару-тăру пăшăрхантарать. Раштавăн 30-мĕшĕнчен пуçласа Чăваш Республикинче 50 пушар пулнă, ытларах чухне эрех ĕçсе ӳсĕрĕлнипе пушарсем тухнă. Лару-тăрăва йĕркелеме Виталий Петьков тивĕçлĕ мерăсем йышăнма сĕннĕ. Çанталăк чылай вăхăт сивĕ тănипе Сергей Гапликов премьер-министр Министрсен Кабинечĕн членĕсене тата муниципалитет пĕрлĕхĕсен пуçлăхĕсене республикăри хуласемпе поселоксен, ялсен пурнăçне тивĕçтерекен тытăмсен ĕç-хĕлне пĕрмаях тĕрĕслесе тăма хушнă.

Планеркăра çавăн пекех республикăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн ытти ыйтăвне те сӳтсе явнă.

***ЧР ПА пресс-службы.***



Акă, манăн асатте, Василий Васильевич Федоров ĕнер 85 çул тултарчĕ. Вăл хăй каласа панипе тата архиври материалсемпе усă курса эпир Федоровсен йăхнесĕлне улттăмĕш сыпăк таран тупса палăртрăмăр. Архив документчĕсенчен пирĕн йăх XIX ĕмĕртен, Филипп ятлă çынран пуçланса кайни паллă. Ун чухне акă мĕнле пулнă: Филипп çемйинче ывăл çуралнă-тăк, Хĕветĕр тесе ят панă ачин хушаматне Филиппов тесе çырса хунă. Вăл вара Федор Филиппов пулса тăнă. Хĕветĕр ывăлне Ваççа ят панă, вăл Федоров хушаматпа çӳреме пуçланă. Манăн мăн асатте, Василий Федоров 1884 çулта Чĕмпĕр кĕпĕрнине кĕрекен Пăва уесĕнчи Энтриел ялĕнче 1884 çулта çуралнă.

ЮБИЛЕЙ

# Вăл – пирĕн мăнаçлăх

Манăн асатте питĕ вĕренесшĕн çуннă. Ялти пуçламăш шкула пĕтернĕ хыççăн ашшĕ ăна Йĕпреç поселокне пĕлӳ илме ăсатнă. Тăрăшса вĕреннĕ вăл, пысăк çын пулас ĕмĕт хавхалантарнă ăна. 1941 çулхи утă уйăхĕн 20-мĕшĕнче вăтам шкултан вĕренсе тухма юлашки экзамен панă вăл. Тепĕр икĕ кунран, 22-мĕшĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă.

1941 çулхи çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче Василий Васильевич Федорова Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ. Унăн хĕсмечĕ Хусанта, артиллерипе миномет училищинче пуçланнă, анчах та 1942 çулхи пуш уйăхĕнче çав училищĕне хупнă. Манăн асаттене ытти курсантсемпе пĕрле Инçет Хĕвелтухăçне янă, кунта вăл çамрăк салтаксене минометран пеме хăнăхтарнă. Чăваш каччи каярахпа Япони милитарисчĕсене хирĕç çапăçнă. Шикотан утравĕ çинче вăрçă вĕçленнĕ уншăн. «Япони çĕнтернĕшĕн» çар медальне чи хаклă наградă выранне хурать ĕçпе вăрçă ветеранĕ. Паян вăл – иккĕмĕш группăри вăрçă инваличĕ.

Асатте пурнăçĕнче кăсăк самантсем сахал мар пулнă. 1947 çулхи кĕркунне кăна демобилизаци йĕркипе тăван тăраха таврăннă салтак. Кĕçĕн лейтенант тумне хывнă-хывманах мирлĕ ĕçе кӳлĕннĕ. Ял-йыш ĕнерхи фронтовика тӳрех «Гвардеец» колхоз бухгалтерĕн тивĕçне пурнăçлама шаннă. Вăрçă юхăнтарса хăварнă хуçалăха ура çине тăратма çăмăл пулнă тетĕр-и? Анчах та асатте, харсăр та çирĕп вăй-халлăскер йывăрлăхсенчен хăраса ӳкмен. 1948 çулта тăрăшуллă бухгалтера тăван колхоз тилхепине шанса панă. 1949 çулхи кăрлачра вăл çемье çавăрнă. Асаннепе, Энтриел шкулĕнчи пуçламăш классене вĕрентнĕ Серафима Терентьевнăпа иккĕшĕ тăватă ачана çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă, пурне те аслă пĕлӳ панă. Аслă ывăлĕ, Вячеслав Васильевич, хальхи вăхăтра республика тĕп хулинчи «Строма» предприятине ертсе пырать. Вăл Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакансене пĕрлештерсе тăракан Йĕпреçсен ентешлĕхĕн ертӳçи те.

Лидия Васильевна – врач, Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетĕнчен вĕренсе тухнă.

Татьяна Васильевна – Ненец наци округĕн тĕп хулин – Нарьян Мар администраци пуçлăхĕн çумĕ.

Кĕçĕнни, Николай Васильевич, вăл манăн атте – «Нарьянмарнефтегаз» ООО мастерĕ.

Çĕр ĕçченĕ пулнипе пĕрлех манăн асатте хăйне салтак пăтти çиçе тĕрекленнĕ çын тесе шутлать. Вăл хăйĕн пурнăçне вăрçă хыççăн каллех çарпа çыхăнтарнă-çке. 1951 çулта ăна Совет Çарне илнĕ те вăл хăйĕн çамрăклăхĕ иртнĕ Инçет Хĕвелтухăçĕнче хĕсметре тăнă. Капитан тăван яла таврăнсан каллех хуçалăх ĕçне кӳлĕннĕ.

Районта Василий Васильевич Федорова пĕлмен çын çук та пулĕ. Ара, вăл колхоз ертӳçи те, Энтриел ял Канашĕн пуçлăхĕ те пулнă-çке. Яланах халăхпа пĕрле, халăх хушшинче.

Асаттен кăкăрĕ çинче çар наградисен хушшинче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин иккĕмĕш степеньлĕ орденĕ, Жуков медалĕ, юбилейсем тĕлне кăларнă чылай медаль пур.

Кашни ăру хыççăнах пирĕн йăхра тин çуралнисене Константин, Екатерина, Лидия, Анна, Илья, Василий ятсем хурасси йăлара. Мана хама çывăх тăвансем: «Виççĕмĕш Василий» тесе хисеплесе чĕнеççĕ. Çапла, эпĕ мăн асаттепе асатте пекех, Василий ятлă. Эпĕ Федоровсен йăхне малалла тăсакан шанчăклă çын пулас ĕмĕтпе пурăнатăп. Федоровсен династийĕн историне çĕнĕ страницăсем çырасси – хамăн пĕрремĕш тата таса тивĕç пулнине лайăх ăнланатăп.

***Василий ФЕДОРОВ,***
***Энтриелĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулăн çиччĕмĕш класĕнче вĕренекен.***



# Ăста фельдшера ял савать

**Огонекри фельдшерпа акушер пункчĕн заведующине, 1975 çултанпа пĕр улшăнмасăр Огонекпа Костер тата Тымар поселокĕсенче пурăнакан çынсен сывлăхне упрассишĕн тăрăшакан фельдшерăн Зоя Михайловна Шишкинан ятне Йĕпреç районĕн Хисеп хăми çине кĕртнĕ. Юратнă ĕçре палăрăмлă çитĕнӳсем тунăшăн, общество пурнăçне активлă хутшăннăшăн тивĕç пулчĕ вăл хисепе. Ăна çак ятпа районăн 80 çулхи юбилейне паллă тунă кун саванăçлă лару-тăрура чысларĕç.**

Зоя Михайловна ялта пуринчен те кирлĕрех çын, мĕншĕн тесен йывăр чирлесе ӳкнĕ çын пурнăçне çăлса хăварасси чи малтанах унран килет, ял çыннисем чи малтан унран пулăшу ыйтаççĕ. Вăл вара хăйĕн хуйхи-суйхи çинчен мансах йывăрлăха лекнĕ çын патне васкать. Кăмăл туртнипе суйласа илнĕ професси ыйтакан тивĕçе чун-чĕре хушнă пек чыслăн пурнăçлать.

Ăна эпĕ питĕ лайăх пĕлетĕп. Иртнĕ çулсенче пĕр ĕç сферинче тăрăшнă май, час-часах пĕр-пĕринпе хутшăнса ĕçленĕ. Эпĕ унăн ĕçченлĕхĕнчен, тирпейлĕхĕнчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнеттĕм, халĕ те çаплах. Унăн ĕçĕнче пĕр кăлтăк та тупаймастăн. Пĕтĕмпех – хăйĕн вырăнĕнче.

Вăл пирĕн района Каçал тăрăхĕнчен, Асанкасси ялĕнчен килсе лекнĕ. Хĕр чухне Козлова хушаматпа çӳренĕскер, вăл Канашри медицина училищинчен вĕренсе тухса кунта ĕçлеме тытăнсан, Огонек кинĕ пулса тăнă.

Çав тери сăпайлă çын вăл Зоя Михайловна, нихăçан та хăйне мăнна хумасть, мухтаннине те илтейместĕн унран. Халăх çинче вара яланах пулать, чир-чĕр лекессинчен асăрханмалли, сыхланмалли меслетсем çинчен, енчен те чирлесе ӳксен, унран сипленмелли майсем çинчен лекцисем вуласа парать, сывă пурнăç йĕркине çамрăксем хушшинче пропагандăлать. Çамрăк амăшĕсене ача сывă та тĕреклĕ çитĕнтĕр тесен, ăна мĕнле пăхмаллине вĕрентет, хăнăхусем парать.

Сывлăх сыхлавĕнче чылай çул ĕçлесе паха опыт пухнă Зоя Михайловнан çамрăксене вĕрентсе хăвармалли те сахал мар, вăл пĕрремĕш квалификациллĕ категорири специалист шутланать, унăн ĕç опытне илме ытти фельдшерсем те пырсах çӳреççĕ.

***В. ВАРГАНОВ,***
***обществăлла корреспондент.***

## Саламлатпăр

Чи хаклă çыннăмăра, пурнăç сукмакĕпе юнашар утакан савнă мăшăрăма, юратнă аттене, хисеплĕ хуняçана, ырă кукаçине – Эконом ялĕнче пурăнакан **Ванифатий Николаевич АЛЕКСАНДРОВА** – чаплă юбилейпа – 75 çул тултарнă ятпа йышлă тăвансемпе пĕрле ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, юман пек çирĕп сывлăх, çутă ăраскаллă кун-çул сунатпăр. Чир-чĕре, хуйха-суйха пĕлмесĕр ӳлĕмрен те ырлăхтелей кăна курса пурăнмалла пултăр, çывăх çыннăмăр.

***МĂШĂРĔ, ХĔРĔ, 4 ЫВĂЛĔ, КИНĔСЕМ, 6 МĂНУКĔ, МĂНУКĔН 1 АЧИ, ТĂВАНĔСЕМ, ХĂТИСЕМПЕ ТĂХЛАЧИСЕМ.***

## АДМИНИСТРАЦИЯ ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА

**объявляет конкурс о замещении должности управляющего делами – начальника отдела организационной работы.**

**Заявления принимаются до 28 января ежедневно с 10 часов.**

**Квалификационные требования: высшее профессиональное образование по специальности «Государственное и муниципальное управление» или образование, считающееся равноценным, а также стаж муниципальной службы на старших должностях не менее двух лет или стаж работы по специальности не менее трех лет.**

**Представить: заявление, копию трудовой книжки, копию документа об образовании.**






**ВНИМАНИЮ РУКОВОДИТЕЛЕЙ, ГЛАВНЫХ БУХГАЛТЕРОВ ПРЕДПРИЯТИЙ, ОРГАНИЗАЦИЙ, ХОЗЯЙСТВ, УЧРЕЖДЕНИЙ**

**РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «Çĕнтерӳшĕн» («За победу») принимает заказы на изготовление всех видов бланочной, этикеточной и книжно-журнальной продукции.**

**Обращаться по адресу: п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6, 1 этаж, производственный участок редакции газеты, или по телефону: 2-11-97.**



САНĂН ÇЫННУСЕМ, РАЙОН

# Василий Раймов юрлать

**Хăйсен пултарулăхĕпе район чыс-сумне çĕклекен сахал мар çынна çуратса ӳстернĕ Йĕпреç ен. Вĕсем çинчен пирĕн район хаçачĕ çырсах тăрать. Паян эпир вулакансене хамăрăн тепĕр мухтавлă ентеш, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Василий Васильевич Раймов çинчен çырса кăтартасшăн.**

Пулас артист 1958 çулхи кăрлачăн 11-мĕшĕнче Чăваш Тимеш ялĕнчи хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Хăйĕн ӳсĕмĕнчи ытти ачасем пекех, ялти вăтам шкула пĕлӳ илме çӳренĕ. Çунатлă ĕмĕт ăна Шупашкарти Ф. Павлов ячĕллĕ музыка училищине, Тамара Супонина паллă юрăçă тата педагог ертсе пыракан вокал уйрăмне илсе çитернĕ. 1983 çулта, диплом илнĕ хыççăн, çамрăк юрăçă Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕнче ĕçлеме пуçланă. Çултан çулах ӳссе пынă унăн юрлас ăсталăхĕ. 1995 çулта Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе пирĕн ентеше «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ» хисеплĕ ят панă.

Пирĕн республикăра Раççей тата Чăваш Республикин халăх артисчĕ Юрий Васильев ертсе пыракан коллектив çитмен вырăн çук та пулĕ. Пур çĕрте те ăшшăн кĕтсе илеççĕ унти юрăççемпе ташăççене. Вĕсем хăйсен ăсталăхне Италире те, Венгрире те, Скандинави çĕршывĕсенче те кăтартнă. Василий Раймовăн чун-чĕрене çепĕçлĕх кӳрекен сассине чылай çĕршывсенчи хуласен концерт залĕсенче итленĕ çынсем. Вăл куракансене чун-чĕрин ăшшипе пĕрлех чăваш юрри-кĕввин янравлăхĕпе тасалăхне парнелет. Аннесем çинчен, тăван çĕр илемĕпе юрату çинчен çырнă юрăсене уйрăмах çĕкленсе те хавхаланса шăрантарать пирĕн ентеш. Пулас артиста, тӳррипе каласан, ашшĕ-амăшĕн тараватлă ăшшипе юратăвĕн çепĕçлĕхне килеличчен илтме шăпа тухман. Пурнăçри чи хаклă çынсем ытла та ир уйрăлса кайнă. Вĕсен таса та çутă сăнарĕсене паян та манăçми аса илӳсенче упрать Василий Васильевич. «Аттепе анне юратăвĕн çутă çăлкуçĕнчен юхса тухнă та манăн пурнăçăмри кĕмĕлленсе çиçекен пĕчĕк юханшыв. Вăл малтан та малаллах ăнтăлать, пĕрре те чарăнса тăмасть. Эпĕ хамăн ачалăхăмри телейлĕ кунсене паян та ырă кăмăл-туйăмпа аса илетĕп. Тăван çĕр-аннемĕрĕн кăкăрĕ çинче чупса çӳренĕ чухне илтнĕ пĕрремĕш янрава тата пуçласа куçа шартарнă хĕвел шевлин çутăлăхне ăçтанха манăçа кăларăн? Тавах çут тĕнче ырлăхне курма пилленĕшĕн аттепе аннене. Вĕсен хĕрӳллĕ юратăвне пула эпĕ пурнăçра çутă еннелле кăна туртăннă тата юрлас ăсталăха çине тăрсах алла илме тăрăшнă», – тет паян савăк кăмăлпа Василий Васильевич.

Ял-йышра ачаллах палăрма ĕлкĕрнĕ Ваçук. Чăрсăр ĕçпе мар, хăйĕн çепĕç сассипе, çынсене савăнтарма пултарнипе. Шкулта вĕреннĕ çулсенче вырăнта йĕркеленĕ пукане театрĕнче вылянă.

Чăваш Тимеш шкулĕ паллă ятлă пулса тăнă хăйĕн вĕренекенĕсемпе тивĕçлипех мухтанать. Вĕсенчен иккĕшĕ – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕсем. Пĕрне вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ.

Василий Васильевич тăван района тăтăшах килет, район, ял, хула тăрăхĕсен администрацийĕсем ирттерекен мероприятисене кăмăлласа хутшăнать. Ăна районти шкулсенче те чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Ялсенчи культура çурчĕсемпе клубсен сцени çинче те час-часах янăрать унăн сасси.

Кай, пĕрре те ĕненес килмест Василий Васильевич çур ĕмĕре çитнине. Вăл пире хăйĕн илĕртӳллĕ сассипе ӳлĕмрен те савăнăç-хавхалану кӳрсе тăрĕ-ха.

Халăх юратакан юрăçа, чаплă юбилейпа саламласа, пултарулăх тӳпинче çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырлăх-сывлăх сунатпăр.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

**ӲКЕРЧĔКРЕ:** *Василий Раймов.*

***Д. ДИМИТРИЕВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

01 ПĔЛТЕРЕТ

## Çулталăка «хĕрлĕ автан» пуçларĕ

Кăрлачăн 1-мĕшĕнче, ирпе 6 сехет те 40 минутра, районти пĕрлехи диспетчер службин пульчĕ çине шăнкăрав çитнĕ. Эйпеçрен инкек пирки хыпарланă. Çак ялти Московский урамĕнчи 49-мĕш çурт тивсе илни çинчен пĕлтернĕ шăнкăравлаканĕ. Пулăшу пама пушар хуралĕн расчечĕсем çула тухнă. Сăмах май каласан, çак хуçалăхра иртнĕ çулсенче хуралтăсем çуннă пулнă. Çав сăлтава пула ку хуçалăхра никам та пурăнман. Кил хуçисем Çĕнĕ çула урăх вырăнта кĕтсе илнĕ. Вуткăвара талккишпех сарăлма паман, инкек çулне вăхăтра пӳлсе лартма ун çинчен çийĕнчех пĕлтерни пулăшнă. Çапах та çуртăн ăш-чикĕ, унта упраннă пурлăх юрăхсăрланнă. Пушар мĕнрен пуçланнă? Ку ыйту хуравне татăклăн калама иртерех-ха, анчах тĕпчевсем электричество хуçалăхĕ юсавлă пулманни çинчен калаççĕ.

Районта пушар хăрушлăхĕ çивĕч, виçĕм çул 52 пушар сӳнтернĕ, иртнĕ çулталăкра вут-кăвар 47 инкеклĕ ĕç илсе килнĕ. Кăçалхи çулталăк малтанхи самантранах «хĕрлĕ автан» ташшинчен пуçланчĕ. Каланине шута илсе тимлĕрех пуласчĕ.

***П. КУПРАНОВ, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн инспекторĕ.***

**Отдел социальной защиты населения Ибресинского района Чувашской Республики Минздравсоцразвития Чувашии**

**объявляет конкурс на замещение вакантной должности государственной гражданской службы по следующим должностям:**

**- главного специалиста-эксперта; квалификационные требования: высшее профессиональное или экономическое образование, стаж работы по специальности не менее 3 лет;**

**- специалиста-эксперта; квалификационные требования: высшее профессиональное образование, стаж работы по специальности не менее 3 лет;**

**- старшего специалиста 3 разряда; квалификационные требования: высшее профессиональное образование или программиста, стаж работы по специальности не менее 3 лет.**

**Претенденты представляют в отдел социальной защиты :**

**а) личное заявление;**

**б) собственноручно заполненную и подписанную анкету с приложением фотографии;**

**в) копию паспорта или заменяющего его документа;**

**г) документы, подтверждающие необходимое профессиональное образование, стаж работы, квалификацию;**

**д) документ об отсутствии у гражданина заболевания, препятствующего поступлению на гражданскую службу или ее прохождение.**

**Заявления принимаются с 10 января по 8 февраля 2008 года.**

ИСТОРИ СТРАНИЦИСЕНЕ УÇСАН

# Трактор техникин музейĕ? Ку – интереслĕ!

**Тĕнчери кирек хăш çĕршывăн чыс-сумне пуринчен малтан ӳстерекенĕ вăл – наука-техника аталанăвĕ мĕнле шайра пулнин кăтартăвĕ. Аталану çулĕ çинчи тĕрлĕ тапхăрсенче пултарулăхĕпе тата ăсталăхĕпе палăрнă çынсем пулнă, вĕсем Тăван çĕршыва вăйлăн та хăвăрт тĕреклетес ĕçре пысăк пулăшу панă. Акă мĕншĕн эпир вĕсене ку таранччен ырă кăмăл-туйăмпа аса илсе пурăнатпăр.**

Анчах та çакна та каласа хăвармалла, наукăпа техникăра тунă ӳсĕм-çитĕнӳсен пур авторĕсен ячĕсене те хальлĕхе тивĕçлипе хакламан-ха. Ку вăл чи малти вырăнта тăма тивĕçлĕ техника отраслĕнче уйрăмах лайăх сисĕнет. Раççей экономикин аталанăвне калама çук пысăк тӳпе хывнă пулсассăн та пирĕн çĕршыври ял хуçалăх валли машинăсем кăларакан отрасль пирки те çавнах каламалла.

Тракторсем кăларас ĕç çĕршывра мĕнлерех аталанса пынин историйĕпе паллашатăн та пирĕн изобретательсемпе конструкторсем, рабочисемпе инженерсем тĕнчери техника прогресне кӳнĕ витĕм питех те уçăмлăн тухса тăрать куç умне.

Тĕнче опычĕ çакна çирĕплетет: техника аталанăвĕн историне тĕрĕс йĕркелес тесен, чи малтанах çак отрасльте тунă çитĕнӳсене сыхласа хăварма тăрăшмалла. Ку ыйтăва вара ятарлă предприятисем музейсем тунипе ăнăçлă татса пама пулать.

Трактор техникин музейне тăвассипе çыхăннă ыйту паян кăна çĕкленекен ыйту мар. Наукăпа техникăра ĕçлекенсем кун пирки тахçанах сăмах хускатнă. Музейăн тĕп никĕсĕ вырăнне наука-тĕпчев трактор институчĕн (НАТИ) Мускав çывăхĕнчи филиалне тума палăртнă. Трактор техникин сăнав полигонĕ Мускавран 70 çухрăмра, «Давыдова Пустынь» ятлă арçын мăнастирĕ çывăхĕнчи илемлĕ кĕтесре вырнаçнă.

Пирĕн çĕршывра вăрçă хыççăнхи çулсенче тракторсем тата ял хуçалăхĕнче усă курмалли ытти машинăсем кăларас ĕç пысăк хăвăртлăхпа пулса пынă. Юхăннă заводсемпе çĕнĕрен çĕкленнĕ тата çĕннисем ĕçе кĕнĕ хыççăн, çав предприятисем, пысăк технологиллĕ оборудованипе пуянланнă, çавна май хальхи йышши конструкцисене тĕпе хурса ăсталанă тракторсем кăларасси вăй илнĕ. Çавăн пек условисенче унччен тракторсене вырăна тухса ирттернĕ сăнавсем тивĕçтерейми пулнă. Акă мĕншĕн СССР Министрсен Совечĕн 1950 çулхи çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнчи постановленийĕпе тата ССР Союзĕн автомобильпе трактор промышленноç министрĕн 1950 çулхи утă уйăхĕн 4-мĕшĕнчи хушăвĕпе НАТИ институтне сăнавлă трактор станцийĕ йĕркелеме ирĕк панă.

Сăнавсем ирттерме юрăхлă вырăн шыраса, НАТИ специалисчĕсем Чехов районне кĕрекен Новый Быт салине çитнĕ. 1952 çулхи çуркунне Мускав çывăхĕнчи сăнав станцийĕн тĕп пайĕ юрăхсăра кăларнă чиркӳ çуртĕнче вырнаçнă. 1953 çулта ăна 6,25 гектар çĕр лаптăкĕпе тата пушă ларакан чиркӳпе усă курма ирĕк панă. Çав тапхăртан пуçласа пирĕн çĕршывра кăларнă пĕтĕм тракторсене Лопасни çĕрĕ çинче сăнаса-тĕрĕслесе пăхнă. Кунта çавăн пекех тĕнчери трактор техникин танлаштаруллă тĕслĕхĕсене палăртас тĕллевпе чикĕ леш енче кăларакан тракторсене те илсе килнĕ.

Сăнава хутшăннă техникăн пуян историйĕ, нумай-нумай отчетсемпе материалсем каярахпа тĕлĕнмелле музей экспозицийĕсене йĕркелеме майсем туса панă та.

1991 çулхи ака уйăхĕн 3-мĕшĕнче СССР автомобиль тата ял хуçалăх машинисем тăвакан ĕç министрĕ НАТИн Мускав çывăхĕнчи филиалĕн базин никĕсĕ çинче трактор техникин музейне тăвасси çинчен хушу кăларнă.

Паянхи куна ку музей 2 курав залĕнчен тата техника литературин библиотека архивĕнчен тăрать. Музей фондĕнче – тракторсен сăнавлă тĕслĕхĕсемпе макечĕсем, XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчен пуçласа пирĕн çĕршывра трактор наукипе техники мĕнлерех аталаннине уçса паракан истори докуменчĕсем, хаçат-журналсенче пичетленнĕ статьясем.

Выставкăн пĕрремĕш залĕнчи фотодокументсенче, архив докуменчĕсенче, тракторсен моделĕсемпе макечĕсенче трактор техникин аталанăвĕ сăнарланнă. Экспозици пуçланнă çĕрте Раççейри пĕрремĕш трактора ăсталанă Федор Абрамович Блинов (1831-1902 ç.ç.) тата 1912 çулта шалти çунав двигательлĕ тата кустăрмаллă пĕрремĕш трактора путевка панă Яков Васильевич Мамин (1873-1955 ç.ç.) изобретательсен ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнăçĕпе паллаштаракан стендсем. Çавăнтах иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш, 30-мĕш çулсенче кăларнă, ун хыççăн сериллĕ майпа кăларма тытăннă СХТЗ-НАТИсен, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăнхи техника моделĕсемпе макечĕсен пуххисене курма пулать.

Куравăн иккĕмĕш залĕнче вара тĕрлĕ çулсенче производство конвейерĕ çинчен аннă 11 йышши трактора кăтартнă, çав шутра «Фордзон-Путиловец» (1924 ç.), «Универсал-2» (1934 ç.), КД-35 (1947 ç.), ХТЗ-7 (1950 ç.) «Т-28 «Владимировец» (1950 ç.), МТЗ-50 (1962 ç.), «Т-5 ЛТЗ» (1962 ç.), Т-ЧАТЗ (1964 ç.) пур. Çав экспонатсенчен ытларахăшне «Наукăпа техникăн патшалăх пĕлтерĕшлĕ палăкĕсем» тесе хакланă.

Музейăн техника архивĕнче – 4 пин ытла документ, пичет изданийĕ, патент, альбом тата трактор наукипе техникин аталанăвĕн историне палăртакан ытти паллă «çăлкуç» нумай. Вĕсен хушшинче çĕршывра туса кăларнă малтанхи тракторсем çинчен Я. В. Мамин изобретатель çырса кăтартни тĕп вырăнта. Çавăн пекех архивра çĕршыври паллă ученăйсемпе конструкторсен: И. И. Трепенковпа И. И. Дранг, В. А. Каргаполов, А. Д. Логин алçырăвĕсем упранаççĕ.

Трактор техникин музейне юлашки çулсенче çĕршыври аграри тытăмĕн вĕренӳ заведенийĕсен студенчĕсемпе преподавателĕсем йышлăн пырса çӳреççĕ. Унăн экспоначĕсемпе паллашакансен хушшинче Китайри трактор завочĕсен представителĕсене, Сербипе Германирен, Франципе Японирен килнĕ туристсене куратăн.

Экспозицие татах та анлăрах сарас тĕллевпе музей куллен кунах нумай тимлет. Çывăх вăхăтрах унăн залĕсенче АС ХТЗ-НАТИ, С-60, ДТ-54, ДТ-24, ДСШ-14, МТЗ-2, МТЗ-7, Т-40, К-700 тракторсен тĕслĕхĕсене вырнаçтараççĕ. Тракторсем тăвасси мĕнлерех аталанса пыни фотодокументсен çĕнĕ ярăмĕсенче уçăмлăн курăнса тăрĕ. Вĕсенчен паллăраххисем çаксем: «Ял хуçалăх, транспорт ĕçĕсемпе, çĕр чавассипе çыхăннă ĕçсене тракторчен мĕнлерех пурнăçланă?», «Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенчи тракторсемпе тракторсен тягачĕсен çар модификацийĕ», «Дизель двигателĕсемпе, пневматикăллă кустăрмасемпе, гидронавеслă тытăмсемпе усă курма тытăннă хыççăн кăларнă тракторсем», «Трактор наукипе техникин аталанăвне çĕршыври ученăйсемпе конструкторсем хывнă тӳпе»... Музей фончĕсене 1917 çулччен, 1917-1941 çулсен хушшинчи тапхăрта кăларнă пичет изданийĕсемпе, архив докуменчĕсемпе пуянлатасси те кун йĕркинчи тĕп ыйтусенчен пĕри.

Çавна май, предприятисенчен, уйрăм çынсенчен хăйĕн фончĕсене пуянлатас тата хушса пырас ĕçре музей пулăшма ыйтать. Тен, сирĕн килĕрти архивра çĕршывра трактор кăларас ĕç-хĕл аталанăвне сăнласа паракан материалсем упранаççĕ? Пур тăк, вĕсене çак адреспа ярса парсан питех те лайăх пулĕччĕ: 142322, Мускав облаçĕ, Чехов районĕ, Новый Быт сали, НАТИ урамĕ, 13. Телефон: (495) 996-07-23.

***/«Сельский механизатор» журнал, 2007 çулхи 10-мĕш номертен кĕскетсе куçарнă/.***



**ФУТБОЛ**

# Кубок хуçи паллă

Йĕпреçри 2-мĕш номерлĕ вăтам шкул стадионĕнче çак шкул дирекцийĕн кубокне илессишĕн пыракан йăлана кĕнĕ иккĕмĕш уçă турнира хутшăнма 9 команда кăмăл турĕç. Ăмăртăва пĕтĕмпе 10 команда килнĕччĕ, анчах та пĕрне, ветерансен «Звезда» командине, турнир йĕркелӳçисем, çанталăк сивĕ тăнă май, тупăшăва явăçтарас мар терĕç. Ветерансем вара çамрăк футболистсен вăййисене пăхса киленчĕç.

Турнира Олимп тытăмĕпе ирттерчĕç. «Труд» (Буинск) «Айвудран» (Эйпеç) 3:0 шутпа выляса илчĕ. «Востока» (Кĕлĕмкасси) Пучинкери «Партизана» çĕнтерме (2:1) çăмăл пулмарĕ. «Темет» (Туçа) Канашри «Локомотива» выляса ячĕ (0:2). «Город» (Шупашкар хули) çивĕч кĕрешӳре «Витязе» (Йĕпреçри хула тăрăхĕ) парăнтарчĕ (1:0). «Восток» «Город» командăна 0:1 шутпа выляса ячĕ. «Труд» «Локомотивран» 4:3 шутпа выляса илчĕ.

Çапла вара, финалта «Город» тата «Труд» командăсем тĕл пулчĕç. Шупашкар хулинчен килнĕ Михаил Шилов тапса кĕртнĕ пĕртен-пĕр мечĕк «Город» командăна çĕнтерӳçĕ пулса тăма пулăшрĕ.

Кубок хуçисем Шупашкар хулинчи спортсменсем пулса тăчĕç. «Труд» – иккĕмĕш вырăнта, «Восток» – виççĕмĕш призер.

Денис Алексеев («Труд») «Чи лайăх хапхаçă», Иван Семенов («Город») «Чи лайăх хӳтĕлевçĕ», Сергей Валерьянов («Восток») «Тапăнса выляКансенчен чи лайăххи» хисеплĕ ятсене тивĕçрĕç.

Иккĕмĕш номерлĕ вăтам шкул директорĕ М. В. Антонов тата Йĕпреç хула тăрăхĕн ертсе пыракан специалисчĕ Ю. А. Июдин çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе, хаклă парнесемпе чысларĕç.

***В. ВАСИЛЬЕВ.***

**ӲКЕРЧĔКРЕ:** *кубока çĕнсе илнĕ «Город» команда.*

# САМАХХАÇМĂШ




**СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. «Сувар» ансамблĕн тĕп «атрибучĕ». 3. «Кăварлă сăвăç» çуралнă ял. 8. Ялти тĕп проспект. 13. Çуралман вутă та, хăнк сикмен çын та. 14. Шыв транспорчĕ. 15. Çул тăрăх юхтаракан кусатăран. 19. Шыв калти. 20. Районăн тĕп учителĕ пулнă Ивановăн ячĕ. 21. Чике тăршшĕ лартакан çын. 22. Çĕпĕрти юхан шыв. 24. Коммуна идейисене парăннă çын. 25. Красноармейски салин ĕлĕкхи ячĕ. 29. «Малтан суха сухала, унтан ... тыт алла» (сăвăран). 30. Алăк пайĕ. 31. Чăвашрадион паллă корреспонденчĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. 32. Çул çинчи инкеклĕ пулăм. 33. Сехре хăппи, асап-нуша. 34. Çамрăк çын. 35. Канаш районĕнчи ял. 36. Чăвашсен наци апачĕ. 40. Рак евĕрлĕ тинĕс чĕрчунĕ. 45. Француз çыравçи Франс мĕн ятлă? 47. Хура тинĕс хĕрринчи хула-курорт. 48. Килте усракан, йышлă ĕрчекен чĕрчун. 49. Театрти тăхтав. 53. Шкулти ăс-тăн пӳлĕмĕ. 54. Çемен Элкер çырнă малтанхи калавсенчен пĕри. 55. «Полосатый ...» илемлĕ кинофильм ячĕ. 56. Грамматика пайĕ. 57. Тинĕс-кӳлĕри тарăн вырăн.

**ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА:** 1. Вырăсла – квадрат, чăвашла – ... 2. Алтай крайĕнче çуралса ӳснĕ паллă киноартист, драматург, писатель. 4. Етĕрне районĕнчи паллă ял. 5. Виçĕ мушкетертан пĕри. 6. Инçет Хĕвелтухăçĕнчи юханшыв. 7. Йĕпе- ... 9. Музыка хайлавĕ. 10. Ыраттарнă вырăнта «шăтса тухакан» шыçă. 11. Вĕрентӳ предмечĕ. 12. Киров облаçĕнчи район центрĕ. 16. Тепĕр майлă – тупăш. 17. Ăсатса яни. 18. Ирхи, кăнтăрлахи, ... 23. Историе кĕрсе юлнă хĕрарăм ячĕ. 26. Хальхи çыравçăсем усă куракан çыру хатĕрĕ. 27. Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, педагог. 28. Йытăсен анлă сарăлнă ячĕ. 35. Манашкăсем пурăнакан вырăн. 37. Пĕтĕм тĕнчери пролетариат çулпуçĕ. 38. Николай Теветкел сăвви те, сăра ĕçмелли савăт та. 39. Мунча сиплĕхне кӳрекен «асамçă». 41. Казахстанри космодром. 42. Шоссе те, çул та мар. 43. Хĕвелтухăç кĕрешĕвĕн тĕсĕ. 44. Чăваш халăх сăвăçĕ. 46. Вăрçăра пуç хунă чăваш çыравçи. 49. Василий Иванович Краснов писателĕн хушма хушамачĕ. 50. Хĕвел-çумăртан сыхланмалли пир хӳтĕ. 51. Пӳрт-çурта кĕрсе çӳремелли вырăн. 52. Анат чăваш тата ... чăваш.

## Саламлатпăр

Юратнă мăшăра, ачамăрсен савнă амăшне, хаклă аппана, хисеплĕ хунямана, ырă та кăмăллă асанне-кукамая – **Зинаида Арсентьевна ЕГОРОВАНА** (Вăтаел) – çуралнă кун ячĕпе пĕтĕм чунчĕререн ăшшăн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, савăнăç-телей сунатпăр.

Хĕвел кулли ачашшăн çиçтĕр,  
Лăпкатăр кăмăлтан сана.  
Чĕре саламĕ ăшшăн вĕçтĕр –  
Ил ытамна йăлтах ăна.  
Пурнăç çулĕ вăрăм пултăр,  
Ан хавшатăр сывлăху.  
Тем пулсан та, чăмпи тултăр,  
Ырăпа çан кăмăлу.

***МĂШĂРĔ, ЙĂМĂКĔ, ЫВĂЛĔСЕМ, КИНĔСЕМ, ХĔРĔСЕМ, КĔРӲШĔСЕМ, МĂНУКĔСЕМ.***

***x x x***

Хаклă мăшăра, кун çути панă, телей пиллесе пурнăç çулĕ çине кăларнă юратнă аннемĕре, хисеплĕ хунямана, ырă кăмăллă кукамай-асаннене, çывăх тăванăмăра, мĕн тивĕçлĕ канăва кайиччен, вăтăр çул ытла, райпо тытăмĕнче сутуçăра ĕçлесе Хисеп грамотисемпе наградăсем илме тивĕçлĕ пулнă **Ольга Никитична НИКИТИНАНА** (Вăтаел) кăрлачăн 14-мĕшĕнче паллă тăвакан юбилейпа, çуралнăранпа 80 çул çитнĕ ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек хитре те вăрăм кун-çул, иксĕлми тапса тăракан çăлкуç пек вăй-хавал, канлĕ ватлăх сунатпăр.

Чи хаклă çыннăмăр эс пирĕн.  
Тайма пуç сана çĕре çити.  
Чĕререн сунатпăр: эсĕ пурăн  
Шăп та лăп пĕр ĕмĕре çити!

***МĂШĂРĔ, ХĔРĔПЕ КĔРӲШĔ, ЫВĂЛĔСЕМ, КИНĔ, МĂНУКĔСЕМ, ÇЫВĂХ ТĂВАНĔСЕМ.***

## ВЫРАЖАЮ БЛАГОДАРНОСТЬ

От всей души выражаю благодарность за оказанную моральную поддержку и материальную помощь в похоронах моей супруги Петровой Елизаветы Ивановны родным, соседям, односельчанам, работникам редакции районной газеты, коллективу Андреевской школы, а также врачу-эндокринологу Третьяковой Татьяне Николаевне, фельдшеру Андреевского сельского поселения и медработникам скорой помощи за оказанную врачебную помощь, чуткое и внимательное отношение к нам, пожилым людям. Низкий поклон всем вам!

***Петров А. М., инвалид ВОВ, п. Кожакпось.***

**21. ПРОДАЮ керамблоки КБ-20 пропаренные. Тел.: 8 9 2 7 8 5 3 6 7 8 0, 89053453265.**

**2-1**

**Коллектив Кошлаушского лесничества скорбит по поводу смерти бывшего лесничего, уважаемого ветерана войны и труда**
**ЯКОВЛЕВА**
**Валентина Ларионовича**
**и выражает глубокое соболезнование близким и родным покойного.**

**Чăваш Тимешри «Апат-çимĕç» магазинта ĕçлекенсем кунта сутуçăра вăй хунă**
**Августина Михайловна**
**ВАСИЛЬЕВА**
**вăхăтсăр вилнĕ пирки унăн çемйипе, тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.**

**Ибресинский районный совет ветеранов войны и труда глубоко скорбит по поводу кончины участника Великой Отечественной войны, ветерана труда**
**ЯКОВЛЕВА**
**Валентина Ларионовича**
**и выражает искреннее соболезнование семье и родным.**

**ОАО «Ибресинский лесокомбинат» выражает искреннее соболезнование родным и близким по поводу смерти бывшего председателя профкома лесокомбината**
**ЯКОВЛЕВА**
**Валентина Ларионовича.**

**Районный и Хормалинский советы ветеранов войны и труда с глубоким прискорбием извещают о смерти ветерана ВОВ**
**КРАСНОВА**
**Георгия Егоровича**
**и выражают соболезнование его семье, родным и близким покойного.**

**Коллектив Ибресинского райпо глубоко скорбит по поводу преждевременной смерти продавца Чуваштимяшского магазина «Продукты»**
**ВАСИЛЬЕВОЙ**
**Августины Михайловны**
**и выражает искреннее соболезнование родным и близким покойной.**

**Коллектив ГУ «Ибресинский лесхоз» глубоко скорбит по поводу кончины бывшего лесничего Кошлаушского лесничества, участника Великой Отечественной войны, ветерана труда**
**ЯКОВЛЕВА**
**Валентина Ларионовича**
**и выражает искреннее соболезнование семье и родным покойного.**

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

АДРЕС РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3465: чув. – 2522, русск. – 943. Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ

Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Филиппов А. А.